ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

1 (798) №, 2015, январь/кăрлач, 15 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/январĕн 14-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧАÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 28-30 |
| Купăста | 30 |
| Сухан | 30 |
| Кишĕр | 35 |
| Ыхра | 120-150 |
| Хăяр | 60-70 |
| Хĕрлĕ кăшман | 30 |
| Помидор | 45-80 |
| Пылак пăрăç | 80-140 |
| Тăварланă хăяр | 80-100 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 80-100 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 35-70 |
| Исĕм çырли | 60-80 |
| Апельсин | 45-65 |
| Лимон | 70-100 |
| Банан | 50-55 |
| Шур çырли | 230-250 |
| Кĕтмел çырли | 200 |
| Хурма | 55-100 |
| Мандарин | 55-90 |
| Гранат | 50-90 |
| Сырлан | 150-180 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 29 |
| Вир кĕрпи | 28 |
| Хура тул -»- | 56-60 |
| Тулă -»- | 26 |
| Манна -»- | 25 |
| Рис -»- | 44-50 |
| Пăрçа | 28-30 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 44-47 |
| Пыл | 350-400 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 190-320 |
| Сурăх ашĕ | 200-330 |
| Пĕвер | 150-170 |
| Пӳре | 70-80 |
| Чăх | 180-200 |
| Кролик | 350 |
| Кăркка | 350 |
| Хур | 350 |
| Салă | 100 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-68 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 150-180 |
| -»- сельдь | 130-150 |
| Мойва | 130-150 |
| Шăла пулă | 150-230 |
| Çуйăн | 180-250 |
| Çупах | 80 |
| Карп | 180 |
| Çăрттан | 150 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 38 |
| Хăйма | 180 |
| Тăпăрч | 180-200 |
| Сыр | 280-300 |
| Услам çу | 180 |



# Çĕнĕ ăратлă чăхсем Кохинхин, Брама, Орпингтон

**Пĕлĕшĕм илемлĕ пысăк чăхсем ĕрчетме пуçларĕ – Брама. «Тата ун евĕрлĕ урăх ăратсем те пур, ашĕ те, çăмарти те аван», – тет. Тĕплĕнрех çырса кăтартаймăр-ши вĕсем çинчен.**

С.ТРОФИМОВА.
Шăмăршă.

Брама ăратлă чăхсен тăван çĕршывĕ – Инди. Çак ăратăн автанĕсем питĕ хитре, пысăк, чĕрĕ виçи 4-5 кг яхăн, чăххийĕ – 3,5 кг. Чĕпĕсем хăвăрт çитĕнеççĕ, çулталăкне 120 çăмарта тума пултараççĕ. Ăрата ашлăх тĕллевпе кăларнă.

Брама евĕрлĕ Кохинхин тата Орпингтон ăратлă чăхсем пур. Вĕсем те кӳлепипе пысăк, аш валли кăларнă ăратсем шутланаççĕ. Çапах та çăмартине те аванах параççĕ – çулталăкне 110 çăмарта. Кохинхин, Брама чăххисем апата тиркемеççĕ, хĕллехи сивĕсенче те аптрамаççĕ. Хĕллехи вăхăтра витене таса улăм сарса памалла, кун вăрăмăшĕ кĕске чухне электричество лампипе çутă вăхăта 10 сехете яхăн тăсни чăхсене хĕлле те çăмарта тума май парать. Çутăна çĕрле сӳнтермелле, унсăрăн чăхсем кунпа çĕре арпаштарма пуçлаççĕ çеç мар, чирлесе кайма та пултараççĕ. Чăхсене хĕллехи вăхăтра усăлма кăлармалли карта пулмалла.

Брама ăратлă чăхсем çутă кĕмĕл, ылтăн сарă-хăмăр, сарăсенкер тĕслисем пулаççĕ. Хĕллехи вăхăтра çăмарта тума пултарнипе паллă.

Кохинхин ăратăн тăван çĕршывĕ – Китай. Вĕсем пĕчĕк, илемĕшĕн тытакан чăхсем пулнă. Каярах селекционерсем ятарлă аш валлилĕх ăрат кăларнă. Кохинхин автанĕсем 4-5 кг, чăххисем 3-4 кг таяççĕ. Çулталăкне 110 çăмарта параççĕ. Кохинхин чĕпписем хăвăрт ӳсеççĕ, виçĕ эрнерен пуçласа апата выльăх çăвĕ хушса пама юрать. Чĕпĕсем виçĕ уйăха çитнĕ тĕле апата çу хушмасан аванрах. Ытлашши çу чĕпĕсене мăнтăрлатса яма пултарать. Мăнтăр чăхсем çăмарта тăвасшăнах мар. Чăпар, кĕл пек кăвак, симĕссĕн йăлтăртатакан хура тĕслисем пулаççĕ. Пĕтĕм чăхсенни пекех автанĕсем япшартарах та илемлĕрех.

Орпингтон ăрат – Англирен. Вĕсем пысăк та илемлĕ, лăпкă. Апата тиркемеççĕ. Автанĕсем – 4-4,5 кг, чăхсем – 3-3,5 кг. Çулталăкне 130 çăмарта тăваççĕ. Хăвăрт çитĕнеççĕ. Орпингтонсене хĕллехи вăхăтра хӳтлĕх кирлĕ. Витере 10 градус ăшă пулсан вĕсем хĕлле те çăмарта тума пăрахмаççĕ.

Сăнласа панă чăхсен ăрачĕсене халĕ ятарлă фермăсенче çеç мар, килти хуçалăхсенче те тытаççĕ. Вĕсем тупăшлă, кил картине илем кӳрекен чĕрчунсем.

## Хĕл Мучи пулăн

**Çĕнĕ çул каникулĕнче пĕтĕм çемье килте пуçтарăнать. Кам йĕлтĕр-коньки сырать, кам килеçурта тирпейлет. Килте хĕвĕшнĕ майăн шӳт-путишĕ те самаях пуçтарăнать. Çырса хурсан кайран аса илме паха. Кулăш – ĕçре пулăш, тет-çке халăх. Çырса ярăр кулăшла самантсене, пĕрле хаваслăнăпăр.**

Çĕнĕ çул иртни виç-тăватă кун. Ниçта та васкамалла мар. Хырăнманнипе янахăм та шăртланнă. Ирхи апатра пĕр кашăк услам çу илсе пăтă çине «куç» туса хуни 4 çулти ывăлăма кăсăклантарнă иккен:

– Атте эсĕ мĕншĕн унта çу хутăн, çу нумай çиесшĕн-им, – ыйтрĕ хайхискер.

– Ара, сухал ӳстĕр тетĕп-çке, çу çисен сухал ӳсет вĕт, – хуравлатăп шӳтлĕн пĕчĕкскере.

– Мĕн, эсĕ Хĕл Мучи пуласшăн-им? – тĕпчет вĕтти.

Эх, апăрша, янахăм шăртланнă вĕт, çитменнине çӳçĕм те самаях шуралнă – хăвăрт кăвакаракан йăхран та – нимĕн те тăваймăн.

– Çапла, ывăлăм, Хĕл Мучи пулас тетĕп, – хуравлатăп хальхинче те шахвăртса.

– Эппин, эппин, – чупрĕ тепĕр пӳлĕмелле пĕчĕкскер, – атте, ме хутаç. Сана хутаç нумай кирлĕ пулать вĕт Хĕл Мучи пулсан, – тăсрĕ канфеччĕсенчен пушатнă ӳкерчĕклĕ хутаçне.

Тав туса хутаçа кĕсьене чикрĕм. Ывăлăм пăрăнсан тĕкĕр умне тăтăм. Ара, чăнах та Хĕл Мучине çаврăнатăп мар-и? Хырăнмалла хăвăртрах!

Арçук ИЛЛИ.

## Халăх сăнанинчен

● Хĕлле вăрман кашласассăн кĕçех çанталăк ăшăтать.

● Çăлтăрсем тӳпере сиксе çиçеççĕ – хаяр сивĕсем пуçланасса.

● Сурхури кун юр, тăман вĕçтерсен ку çул вăрманта мăйăр нумай пулĕ.

● Кăшарни эрни ăшă тăрсан тырă вырнă тапхăрта сивĕ пулĕ.

● Кушак хĕлле сĕтел урине чавалать – тăман тухасса.

## Мулкачсем писĕç

Вăрман хĕрринчи ялсенче е ял-хуларан инçерех, шăплăхра, вырнаçнă дача пахчисенче хĕллехи вăхăтра чĕнмен хăна – мулкач – час-часах пулкалать. Пахчара чуна усрамалăх мĕн те пулин тупма май пуррине пĕлет ĕнтĕ апăрша. Ытларах çамрăк улмуççисене кăшласа сиенлеççĕ вĕсем. Сăтăрçăсене хăратмалли пĕр ансат меслет сĕнесшĕн вулакансене. Пĕр литр çурă кĕрекен пластик савăтсене канра çине пĕр-пĕрне силленсе лекмелле мăшăрласа çыхмалла. Савăт пăккисене усмалла. Мăшăрланă савăтсене йывăç турачĕсенчен çакмалла. Пĕр йывăç çине виç-тăват мăшăр шăкăртма çакма юрать. Хĕвеллĕ кунсенче пластик савăтсем йăлтăртатса куçа çиеççĕ, кăшт çил вĕрнипех пĕр-пĕрне лексе чăштăртатаççĕ, çил вăйлăрах пулсан вара пушă савăтсем чăштăртатаççĕ çеç мар, шăхăрса куянсене хăратаççĕ. Çак меслет мулкачсем пахчана иленесрен пулăшĕ.

Т.СОТНИКОВА.
Шупашкар хули.

*Кофе çăри кĕленче савăта, стакана, черккене лайăх çуса тасатать. Унпа металл савăт-сапана та илемлĕ сăн кĕртме пулать: савăта кофе çăрипе йĕпетнĕ татăкпа сăтăрмалла, ун хыççăн сивĕ шывпа çумалла.*

## Кун мĕнпе паллă

**Январь, 13** – Раççей пичет кунĕ.

**Январь, 14** – Кивĕ Çĕнĕ çул.

**Январь, 17** – Сурхури эрни вĕçленет. Светке çӳреме чарăнаççĕ.

**Январь, 18** – Чăваш пичет кунĕ. Крещени сочельникĕ.

**Январь, 19** – Кăшарни /Крещение Господне/ кунĕ.

## Вулакансем ыйтнипе

# Лайăх выльăх суйлар

**Куйбышевски ăратлă сурăхсем çинчен тĕплĕнрех пĕлес килет.**

**Павел ПЕТРОВ.**
Шупашкар районĕ.

Куйбышевски ăратлă сурăх пирĕн çĕршывра ятарласа кăларнă сурăх ăрачĕсенчен чи пирвайхи. Ăна черкас сурăхĕсене акăлчан ромни-марш такипе хутăштарса тунă. Çак ĕçпе 1936-1948 çулсенче Куйбышев облаçĕнче /халĕ Саратов облаçĕ/ Кошкинский патшалăх селекци станцийĕнче тимленĕ. Çĕнĕ ăрата ĕрчетме пуçланă тăрăхпа çыхăнтарса Куйбышевски ят панă.

Çиелтен пăхмашкăн çак сурăхсем ромни-марш ăратлă сурăх пекрех. Вĕсем пиçĕ те вăрăм кĕлеткеллĕ, çирĕп, пуçĕ сарлака, мăйĕ, урисем кĕске, майăракасем сурăхсен те, такасен те çук. Çăмĕ йăлтăркка шурă тĕслĕ – 12-15 см.

Путексем хăвăрт ӳсеççĕ, çур çулта 60-65 кг яхăн пулаççĕ. Çитĕннĕ така вăтамран 110-120 кг таять, сурăхĕсем – 60-70 кг.

Куйбышевски сурăх аш тата çăм лайăх паракан ăрат. Ашсăр пуçне унăн çăмĕ те паха. Сурăхран 4-5 кг, такаран 5-7 кг çăм илме пулать. Вăтамран 100 сурăхран 120-130 путек илеççĕ.

Килте çак ăратлă сурăха ĕрчетни тупăшлă. Унран паха çăм тата аш нумай илме пулать. Сурăх какайĕ хальхи вăхăтра хакланса пырать. Ăна туянакан та чылай. Куйбышевски сурăхсем пирĕн тăрăхри сивĕсенче аван хĕл каçаççĕ, шăрăхсенче те питех аптрамаççĕ. Самар, Чĕмпĕр, Ярославль облаçĕсенче, Тутар Республикинче вĕсене нумай усраççĕ.

# Кивĕ турăшпа мĕн тумалла?

**Аппа Турра ĕненетчĕ. Хăй пурнăçран уйрăлса кайрĕ, иконăсем питĕ нумай юлчĕç. Мĕн тумалла çав турăшсемпе?**

**Р.ХОРАСКИНА.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ.

Кивĕ турăшсене, тĕн календарĕсене /чиркӳрен туяннă пулсан/, юрăхсăра тухнă, кивелнĕ Библи кĕнекисене чиркĕве кайса памалла. Унта вĕсене тĕн йăли-йĕркипе ятарлă кăмакара çунтараççĕ. Сире уншăн çылăх пулас çук, никам та тĕлĕнсе пăхмĕ.

# Банан хуппи усăллă



Банана тасатса хуппине çӳпĕ витрине вăркăнтарнă чухне хамăр йăнăшнине чухламастпăр та. Банан хуппи те сахал мар усă кӳме пултарать иккен.

Банан хуппи тĕксĕмленнĕ кĕмĕл савăтсапана тасатма лайăх. Ăна блендерпа вĕтетмелле, шăл пасти пек пуличчен шыв хушмалла. Çак хутăша çемçе пусмапа илмелле те кĕмĕл япаласене сăтăрмалла. Тĕксĕм тĕс тасалсан банан юлашкине çуса ярăр та çемçе татăкпа шăлса типĕтĕр.

Çутçанталăк кӳнĕ çусен пахалăхне кура банан хуппи тир-сăран атăпушмака тасатма юрăхлă. Банан хуппин шал енĕпе пушмака сăтăрăр, унтан типĕ пусма таткипе якатăр.

Шăрпăк кĕнĕ пулсан кăларма май çук тăк çав тĕле банан хуппине шал енĕпе хумалла. Пĕр талăка яхăн пластырьпе çыпăçтармалла. Бананри сиплĕ хутăшсем шăрпăка ӳтрен туртса илеççĕ, сурана сиплеççĕ.

Ăнсăртран хĕвелпе ытларах пиçсе кайсан, вăрăмтуна çыртсан, алурана шайăрттарсан каллех банан хуппи пулăшать. Хупăри ферментсем ыратнине ирттереççĕ, сурана сиплеççĕ. Суран тĕлне е пиçнĕ, вăрăмтуна çыртнă вырăна банан хуппи çыхса хумалла. Ыратни лăпланать, ӳт хăвăртрах сиплешет. Псориазран, питри шатрашкасенчен хăтăлма та пулăшать вăл. Тимреленекен вырăнсене банан хуппипе сăтăрмалла. Шатрашкасене те çаплах сăтăрмалла. Темиçе кун сипленнĕ хыççăн ӳт тасалнине туятăр.

Банан хуппи ӳтшĕн лайăх. Пите, мăя, хулсене сăтăрăр. Вăл питри перкеленчĕксене пĕтерме, ӳте апатлантарма пулăшать. Банан хуппине чечек шăварма хатĕрленĕ шыва ярса лартăр, пĕр-икĕ кунран çак шывпа чечексене шăварăр. Чечекшĕн вăл паха удобрени. Унта кали, магни, кальци микроэлеменчĕсем пур.

# ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 15.01 | + 1 | 0 |
| 16.01 | – 2 | – 8 |
| 17.01 | – 7 | – 7 |
| 18.01 | – 3 | – 3 |
| 19.01 | – 4 | – 7 |
| 20.01 | – 6 | – 8 |
| 21.01 | – 8 | – 12 |

# КУН ТĂРШШĔ

| | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 15.01 | 7.38 | 26 у.к. |
| 16.01 | 7.41 | 27 у.к. |
| 17.01 | 7.44 | 28 у.к. |
| 18.01 | 7.48 | 29 у.к. |
| 19.01 | 7.51 | 30 у.к. |
| 20.01 | 7.54 | çĕнĕ уйăх |
| 21.01 | 7.57 | 2 у.к. |

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 57 минут пулать, 57 минут вăрăмланать.**

# Ăшши аван-и?

**Ял çыннишĕн килти мунчара çăвăнса рехетленниничен пахи мĕн пур-ши? Хĕллехи вăхăтра пушшех те аван вăл – çан-çурăма кантарать, кăмăла çĕклет. Унăн уссине, техĕмне кашниех туять-тĕр.**

В.В.Иванов инженер-строитель сĕнекен мунча планĕпе паллаштаратпăр. Вăл самаях пысăк, хальхи вăхăтра килĕшӳллĕ темелле пулĕ. Кăмăл пулсан унăн калăпăшне кăшт пĕчĕклетме те пулать.

В.В.Ивановăн 2013 çулта «Хороша семейная баня» кĕнеки пичетленсе тухнă. Кĕнекере мунча мĕнле кĕмелли, ăшăнса тарласа выртмалли, çапăнмалли, çăвăнмалли меслетсем пирки вуласа пĕлме пулать.

Мунча лартмалли вырăна мĕнле суйласа илесси, никĕсе мĕнле ярасси, çивитти витесси таранах çырса панă кĕнекере. Мунча тумалли строительство материалĕсем, хатĕрсем çинчен, мунча кăмакине тата мăрийне мĕнле тумаллине тĕплĕн ăнлантарнă. Мунча планĕ – асăннă кĕнекерен.




1 – мунча умĕ; 2 – тамбур; 3 – уçăлса илмелли хытă сак; 4 – стена çинчи япала çакмалли çекĕлсем; 5 – хывăнса тăхăнмалли сак; 6 – пирвайхи медицина пулăшăвĕ памалли аптечка, япала çумалли порошок е ытти вак-тĕвек упрамалли шкапсем; 7 – сĕтел; 8 – япала çумалли машина; 9 – çăвăнмалли пӳлмек; 10 – вĕри шыв бакĕ; 11 – сивĕ шыв бакĕ; 12 – ларса çăвăнмалли лутра саксем, 13 – массаж тумалли, ачасене çумалли çӳллĕ сак; 14 – душ кабини; 15 – çапăнмалли пӳлмек; 16 – кăмака, 17 – çапăнмалли тенкелсем, 18 – картлашка.

# Кăшарни – Крещени

**Январĕн 19-мĕшĕнче Христос тĕнне ĕненекенсем Иисус шыва кĕнине палăртаççĕ. Турра ĕненекенсемшĕн 12 чи пĕлтерĕшлĕ уявсенчен пĕри вăл.**

Евангели тăрăх Иоан Предтеча чăн Турра ĕненекенсене Иордан юханшывĕнче шыва кĕртнĕ. Иисус Христос та Иоан патне пырса хăйне шыва кĕртме ыйтать. Çак кун Иисус 30 çул тултарнă, вăл халăх умĕнчи чи пысăк тивĕçне пурнăçлама хатĕрленнĕ. Турă курăннине /Богоявление/ вара Иисус шыва кĕнĕ чухне тӳперен Турă Ашшĕн хăватлă сасси илтĕннипе тата Çветтуй Сывлăш кăвакарчăн евĕр курăнса Иисус çине аннипе çыхăнтараççĕ. Шăпах çакă Турă Ашшĕ, Ывăлĕ тата Çветтуй Сывлăш пĕрлĕхĕ пулса курăнни.



Кăшарни умĕн январĕн 18-мĕшĕнче турра ĕненекенсем пĕр кунлăх типĕ тытаççĕ. Каçхине ăшалана пулă, купăста кукли, улма-çырла компочĕпе апатланаççĕ. Кăшарни апачĕ сĕтел пуянлăхĕпе мар, таса – çветтуй шыв – сăвапласăхĕпе паллă. Çак кун чиркӳрен илсе килнĕ Çветтуй шывпа килçурта сăвапласçĕ, чир-чĕртен имленеççĕ.

Çак вăхăталла пирĕн тăрăхал кăшарни сиввисем килеççĕ. Кăшарнинче юр çусассăн тыр-пул лайăх пулать тесе хĕпĕртенĕ хресчен. Усалсенчен сыхланма, çылăхсенчен хăтăлма çирĕп яш-кĕрĕм вак касса шыва пуçĕпех кĕрсе тухнă. Хĕрсем мунча кĕрсе тасалнă, ирĕке тухса юрпа сапăннă. Çакă çынна илем, сывлăх кӳрессе шаннă.

## Тĕпелте чухне

# Купăста яшки беконпа



**1-ер сухан, кишĕр, кăштах сельдерей тымарĕ, 1 шăл ыхра, 300 грамм çĕрулми, 150 грамм купăста, типĕтнĕ курăксем /тимьян, майоран, базилик/, 100 грамм бекон, 3 апат кашăкĕ олива çăвĕ, тутине кура тăварпа пăрăç кирлĕ.**

**Илемлетме:** петрушка çулçи.

Суханпа ыхрана тасатса вĕтетмелле. Çĕрулмине, сельдерее, кишĕре çуса тасатмалла, тăваткалласа турамалла.

Кастрюльте 2 апат кашăкĕ олива çăвĕ вĕрилентермелле. Туранă пахчаçимĕç хушмалла та 5-7 минут пăшăхламалла.

Ун хыççăн 1 литр шыв хушса 20 минут пĕçермелле. Тăвар, пăрăç сапмалла.

Кастрюле янă çимĕçсене блендерпа нимĕрлемелле. Купăстана улăм пĕрчи пек турамалла. Купăстана яшкана хуса 5 минут вĕретмелле.

Бекона тăрăхла е тăваткăлласа турамалла, яшкана ямалла.

# Рисра сурăх ашĕ



**Ăна валли 150 г сурăх ашĕ, 60 г рис, 100 г бульон, 5 г петрушка кирлĕ.**

Сурăх ашне тăваткалласа турамалла, плашкана хумалла, кăштах шыв ямалла, тăвар, пăрăç, лавр çулçи хушмалла та аш çемçеличчен пĕçермелле.

Риса чӳхемелле, çатма çине хумалла, çиелтен çемçеличчен пĕçернĕ аша сармалла, шӳрпине ямалла. 180 градус хĕртнĕ духовкăра рис сарăлса пиçиччен тытмалла. Апата вĕрилле çимелле, пахчаçимĕç салачĕпе парсан аван.

# Çĕрулми – духовкăра

Çĕрулми пирĕн тăрăхра лайăх çитĕнекен пахчаçимĕç. Кашни кун çисен те йăлăхтармасть вăл пире, хресчене. Унран тĕрлĕ апат хатĕрлетпĕр, чăмăрла пĕçернинчен пуçласа чипс таранах. Ансат рецептсемпех тутлă çиме хатĕрлеме пулать.



**«Кăмăл пулсан»** ятлă блюдо валли кирлĕ япаласем. Çĕрулми – 1кг, 1 кишĕр, пуçлă сухан – 1, помидор – 1, çĕрулми валли хатĕрленĕ техĕмлĕх – пĕр апат кашăкĕ, тип çу – пĕр апат кашăкĕ, олива çăвĕ 1 апат кашăкĕ /сук пулсан унсăрăн та юрать/, тутине кура ешĕл çимĕç, ыхра.

Çĕрулмине çаврасем туса е тăваткалласа, сухана çурма çавран, кишĕре тăрăхла турамалла. Помидора çĕрулми çине теркăпа хырмалла. Вăл çĕрулми типсе каясран кирлĕ. Пĕтĕмпех чашăка хумалла та приправа сапмалла, тип çу ямалла /пĕр кг пуçне пĕр кашăк тип çу çителĕклĕ/. Пĕтĕмпех лайăх пăтратпăр та духовкăра ăшаламалли «çанăпа» чĕркетпĕр. 180° хĕртнĕ духовкăна хурса пĕçеретпĕр. Духовка кашнин тĕрлĕрен. Çавăнпа вăхăта палăртасси те тĕрлĕрен.

## 19 тунтикун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 2.15, 3.05 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15, 0.30 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.20 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «МОСГАЗ» 16+
3.20 «Сколько стоит бросить пить» 16+

### РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00, 2.55 «Еж против свастики» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
17.30 Т/с «БЕДНЫЕ РОДСТВЕННИКИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «КОСАТКА» 12+
23.40 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.40 Х/ф «ВОЗВРАЩЕНИЕ БУДУЛАЯ»
3.55 Комната смеха

### ЧТВ
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.30 «Дело врачей» 16+
9.25, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
22.40, 5.15 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ» 16+
1.30 «Точка невозврата» 16+
2.30 Дикий мир 0+
2.55 Т/с «ШЕРИФ» 16+
4.30 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Жемчужина Поволжья**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Библия сегодня**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 20 ытларикун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.40, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 2.45, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «МОСГАЗ» 16+
14.10, 15.15, 23.55 «Время покажет» 16+
16.00, 3.50 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 0.45 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
1.40 «Галина Польских. По семейным обстоятельствам» 12+

### РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 «Скальпель для первых лиц. Тайная хирургия» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
17.30 Т/с «БЕДНЫЕ РОДСТВЕННИКИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «КОСАТКА» 12+
23.40 Т/ф «Сорок сороков»
0.45 Х/ф «ВОЗВРАЩЕНИЕ БУДУЛАЯ»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Утренний гость /на чувашском языке/**
**9.30-9.55 Рождественская елка**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.30 «Дело врачей» 16+
9.25, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ» 16+
1.25 Главная дорога 16+
2.00 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Кăмăлтан. Ирхи концерт**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тĕсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 21 юнкун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.40, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 2.45, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «МОСГАЗ» 16+
14.25, 15.15, 23.55 «Время покажет» 16+
16.00, 3.50 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 0.45 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
1.40 «Жизнь - не сказка» 12+

### РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00, 3.00 «Илья Старинов. Личный враг Гитлера» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
17.30 Т/с «БЕДНЫЕ РОДСТВЕННИКИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «КОСАТКА» 12+
22.50 «Легкое дыхание Ивана Бунина» 12+
0.15 Т/ф «Гонки по вертикали»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
В связи с профилактическими работами, вещание телеканала начнется в 10.00
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.30, 14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.55 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
22.40, 5.15 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ» 16+
1.30 Квартирный вопрос 0+
2.35 Дикий мир 0+
2.55 Т/с «ШЕРИФ» 16+
4.30 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Журналистсем ентешсем**
**6.34 Имею право**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.26 Эра: экономика, расчет, анализ**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Чĕрĕ шыв**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 22 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.20 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «МОСГАЗ» 16+
14.25, 15.15, 0.30 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.20 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
2.15, 3.05 «Как не сойти с ума» 12+

### РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00, 3.00 «Ударим рублем по фашизму» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
17.30 Т/с «БЕДНЫЕ РОДСТВЕННИКИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «КОСАТКА» 12+
22.50 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 «Восход Победы. Советский «блицкриг» в Европе» 12+
1.30 Т/ф «Гонки по вертикали»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Поступная среда**
**9.20-9.55 Театру сатиры и юмора-25 лет. 4 часть**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.30 «Дело врачей» 16+
9.25, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Т/с «СВЕТ И ТЕНЬ МАЯКА» 16+
22.40, 5.15 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ» 16+
1.30 «Дачный ответ» 0+
2.35 Дикий мир 0+
2.55 Т/с «ШЕРИФ» 16+
4.30 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юхма енĕм – Патăрьел**
**6.31 Спорт площадки**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27 Открытая студия**
**7.56-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 23 эрнекун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 Т/с «МОСГАЗ» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.35 «Три аккорда» 16+
23.45 Х/ф «ПРИТВОРИСЬ МОИМ ПАРНЕМ» 16+
1.30 Х/ф «ОМЕН 2» 18+
3.30 Х/ф «НАВЕРНОЕ, БОГИ СОШЛИ С УМА 2» 12+

### РОССИЯ 1
5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10, 3.00 «Людмила Савельева. После бала» 12+
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
17.30 Т/с «БЕДНЫЕ РОДСТВЕННИКИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
21.00 Х/ф «РОДНОЙ ЧЕЛОВЕК» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
0.30 XIII Торжественная церемония вручения Национальной кинематографической премии «Золотой Орел»
3.55 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.10 Телеюрă**
**9.45-10.05 Точка зрения**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.30 «Дело врачей» 16+
9.25, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Х/ф «БОЦМАН ЧАЙКА» 16+
23.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ» 16+
1.25 «Женские штучки» 16+
2.20 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.15 Т/с «ШЕРИФ» 16+
4.45 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 У Лукоморья**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 24 шăматкун

### 1 КАНАЛ
5.40, 6.10 «В наше время» 12+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.30 Х/ф «РАССЛЕДОВАНИЕ» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Валентина Талызина. Время не лечит» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Александр Мень. «Я все успел...» 12+
14.10 «ДОстояние РЕспублики: Филипп Киркоров»
15.50 «Воины бездорожья»
16.50 «Кто хочет стать миллионером?»
18.20 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Театр Эстрады» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Сегодня вечером» 16+
23.10 Х/ф «НЕРАССКАЗАННАЯ ИСТОРИЯ США» 16+
0.20 Х/ф «ВТОРЖЕНИЕ» 16+
2.30 Х/ф «МОЙ САМЫЙ СТРАШНЫЙ КОШМАР» 16+
4.20 «Мужское / Женское» 16+
5.15 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
4.40 Х/ф «ЗЕМЛЯ САННИКОВА»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Земля Героев. Вяйнямейнен» «Чудеса России. Озеро Баскунчак»
11.20, 14.30 Х/ф «МЕТЕЛЬ» 12+
15.05 «Это смешно» 12+
18.05 Х/ф «ХРАНИ ЕЕ, ЛЮБОВЬ» 12+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «ВДОВЕЦ» 12+
0.30 Х/ф «СТЕРВА» 12+
2.20 Х/ф «ВРЕМЯ РАДОСТИ» 12+
4.15 Горячая десятка 12+

### ЧТВ
**8.10-8.20 Вести-Чăваш ен**
**10.05-11.00 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.35, 0.35 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Поедем, поедим!» 0+
11.50 Квартирный вопрос 0+
13.20 Х/ф «ДВОЙНОЙ БЛЮЗ» 16+
17.00 «Контрольный звонок» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
22.00 «Ты не поверишь» 16+
23.00 «Еда живая и мертвая» 12+
0.00 «Мужское достоинство» 18+
2.30 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.20 Дикий мир 0+
3.35 Т/с «ШЕРИФ» 16+
5.10 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Жемчужина Поволжья**
**12.33 Килте пĕçерер-ха**
**12.39-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тÿрĕ эфир**

## 25 вырсарникун

### 1 КАНАЛ
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «СКАЗ ПРО ТО, КАК ЦАРЬ ПЕТР АРАПА ЖЕНИЛ»
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Теория заговора» 16+
13.15 «Владимир Высоцкий и Марина Влади. Последний поцелуй» 16+
14.20 Х/ф «СТРЯПУХА»
15.45 «Живой Высоцкий» 12+
16.40, 18.15 «Высоцкий» 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 К дню рождения Владимира Высоцкого «Своя колея» 16+
0.35 Х/ф «СКАЧКИ» 12+
2.30 Х/ф «ГОЛЫЙ БАРАБАНЩИК» 16+
4.20 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.35 Х/ф «ХОЗЯИН ТАЙГИ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Кулинарная звезда»
12.10 Х/ф «ДОРОГА, ВЕДУЩАЯ К СЧАСТЬЮ» 12+
14.20 Местное время. Вести-Москва
14.30 «Смеяться разрешается»
16.20 Х/ф «НАДЕЖДА» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
23.50 Х/ф «ЧАСТНЫЙ ДЕТЕКТИВ ТАТЬЯНА ИВАНОВА. ДОЛЬЧЕ ВИТА ПО-РУССКИ» 12+
1.45 Х/ф «ОДНА НА МИЛЛИОН» 12+
3.35 «Моя планета» представляет. «Земля Героев. Вяйнямейнен» «Чудеса России. Озеро Баскунчак»

### ЧТВ
**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ
6.00, 0.35 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 Своя игра 0+
14.15 Х/ф «БОЦМАН ЧАЙКА» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
20.00 «Список Норкина» 16+
21.10 Х/ф «ИДЕАЛЬНОЕ УБИЙСТВО» 16+
23.00 «Таинственная Россия» 16+
0.00 «Мужское достоинство» 18+
2.30 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.15 Дикий мир 0+
3.35 Т/с «ШЕРИФ» 16+
5.10 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Сан яту-вĕрентекен**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри — мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Театр у микрофона**

## Кулăш

Çěнě çул касě. Урампа Хěл Мучипе Юр Пике чěнне çěре утаççě. Юр Пике:

– Питě ывăнтăм эпě. Пурте уявра, эпир вара...

Хěл Мучи:

– Паян чăн-чăн уяв-çке-ха! Ав, пăхсам /мигалкăпа иртекен полици машини еннелле тěллесе/ полицейскисем те гирляндăпа çÿреççě.

* * *

Январěн пěрремěшěнче ирхине амăшě ывăлне шăнкăравлать:

– Саламлатăп сана, Çěнě çула мěнле кěтсе илтěн?

– Ывăлě, ыйхăран та вăранайманскер, мăкăртатать:

– Эп ăна кěтсе илмен... Хăех килнě.

## Усăллă канаш

Шаркку валли пан улмирен тутлă соус хатěрлеме пулать. 6-10 пан улми хуппине шуратмалла, вăррине кăлармалла. Кашни çимěçе 4 пая пайламалла, кастрюле хумалла. 1 кашăк услам çу, шěвěрех шаркку, кăштах сахăр, 3-4 кашăк шыв хушмалла, хуплամалла та çемçеличчен пăшăхламалла. Ěне, хур, кăвакал ашěпе çиме аван.

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**25.Чăнкă тамада.** Т. 89373935779.

**32.Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А., Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001-096 от 06.06.2014 г. МЗ СР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 8-937-375-63-78, Мила.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**614.Натяжные ПОТОЛКИ. Новогодние подарки.** Т. 89623213180.

**733.Тамада, диджей, баян.** Т. 8-917-679-84-08.

**744.Натяжные ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**789.РЕМОНТ:** эл/пилы, рубанки, болгарки, зернодробилки, дрели, пылесосы, соковыжималки, мясорубки; **ПЕРЕМОТКА** эл. двигателей, якорей. Т. 8-905-027-46-59 /г. Чебоксары, Гладкова, 9/.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА ПĚЛТЕРŸ
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13-мěш çурт, 316-мěш пÿлěм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"**

**УВАЖАЕМЫЕ ВЕТЕРАНЫ И ПЕНСИОНЕРЫ!**

**Санаторий «Надежда» поздравляет Вас с Новым годом и Рождеством Христовым и предлагает с 12 января 2015 года санаторно-курортные путёвки (10 дней) по сниженным ценам:**

~~18000 руб.~~, **16500 руб.**

**В стоимость включены проживание, питание, лечение.**

**К ВАШИМ УСЛУГАМ:** ● уникальные методы лечения различных заболеваний,● 4-х разовое питание (заказное меню), ● сауна 2 раза в неделю, ● бассейн ежедневно.

Наличие санаторно-курортной карты обязательно!

**Спешите! Количество путевок ограничено!**

**Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.**

**г. Новочебоксарск, ул. Набережная, 46**

Лицензия ЛО-21-01-001130 от 05.08.2014 выдана Минздравом и соцразвития Чувашской Республики

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

**Добавки скотине, а польза для нас**

Многие хозяева применяют кормовые добавки «Здравур». Они повышают продуктивность скота и птицы, укрепляют их здоровье, улучшают использование обычных кормов. Однако не всем известно, что благодаря добавкам «Здравур» получаемые на подворье яйца, молоко и мясо становятся вкуснее и полезнее для нашего здоровья. Это действительно так.

✔ **Во-первых,** здоровые животные дают здоровую продукцию.

✔ **Во-вторых,** благодаря лучшему балансу питательных веществ в рационе получаемая продукция более полноценна в диетическом отношении.

✔ **В-третьих,** научные исследования подтвердили, что благодаря витаминно-минеральным премиксам повышается содержание в яйцах, молоке и мясе легкоусвояемых витаминов и микроэлементов (в т.ч. вит. А, Е, группы В, цинка, йода и др).

При этом добавки «Здравур» не содержат антибиотиков, гормонов, ГМО, химических стимуляторов роста.

ЗДРАВУР®

*На правах рекламы*

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 8-987-576-65-62.

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит**. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную–более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит – дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич,** кольца. Т. 8-961-339-33-63.

**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, навоз. **Доставка.** Т. 8-905-197-40-19.

**20.Кирпич, к/блок.** Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер, доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-3596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент, кирпич,** к/кольца. Доставка. Т. 8-903-346-8556.

**27.Спутниковое телевидение.** Установка. Выезд. Т. 89674704384.

**28.Дрова березовые** /3 м/. Доставка. Т. 89278626412, Руслан.

**29.Косилки,** грабли, фрезы, опрыскиватели, картофелесажалки, **доильные аппараты. ДОСТАВКА!** Т.: 89379559802, 89373758095.

**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**34.Земельный участок** под ИЖС /10 соток/ в Чебоксарском районе. Т. 89278639245.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. Бурение. Т.: 8-987-666-4140, 8-937-010-0141.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.ОТРУБИ,** зерно, **к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**79.ПРИЦЕПЫ** для мини-трактора, мотоблока. Т. 89053444735.

**177.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, **половняк, КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**550.Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка до 25 т. Т.: 8-917-650-0385, 8-960-307-3399.

**560.ОКНА, ДВЕРИ «БАРС».** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**784.Песок, гравмассу**. Доставка. Т. 8-906-133-79-75.

**787.Кирпич, гравмассу, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89033228078.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**19.ДОМ с участком** в любом состоянии. Т. 89603008787.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**331.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.

**332.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89279993737.

**729.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

## ĚÇ РАБОТА

**54.Монолитчики, каменщики в Подмосковье.** Вахта, жильё, питание. Т. 89176737773.

**110.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда, вахта. Т. 8-925-002-22-38.

« ХЫПАР »

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çуртě” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийě

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тěп редактор В.В.ТУРКАЙ

Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĚ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчě, 13, Пичет çурчě, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.

ЫЙТСА ПĚЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 28-85-87, 56-00-67.

коммерци директорě: 28-83-70, 56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.

Электронлă почта: hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийěсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленě.

14.01.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çуртě» АУ техника центрěнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийěнче пичетленě. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13. 56-00-23 – издательство директорě.

Тираж 15484. Заказ 65.